## Форум

# "Эпĕ – сăмах! Эсĕ – ĕç! Эпир – вăй!"

Çак девизпа иртрĕ февралĕн 20-мĕшĕнче Муркаш шкулĕнче районти Çамрăксен форумĕ.

Форума район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçи Л.И. Мочалов, методика кабинечĕн ертӳçи З.Ю. Дипломатова, ял тăрăхĕсенчи çамрăксен канашĕсен ертӳçисем, тĕрлĕ отрасльсенчи предприятисемпе организацисенче ĕçлекен çамрăк специалистсем, активистсем пухăнчĕç. Ильинка тата Ярославка ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, Уйкас Янасал ял тăрăхĕн специалисчĕ хутшăнма кăмăл турĕç. Ытти ял тăрăхĕсен яваплă ĕçченĕсемшĕн форум пĕлтерĕшлех мар пулас. Вĕсем валли хатĕрленĕ вырăнсем пушшăнах ларчĕç.

Пухăннисем чи малтан районти историпе краеведени музейĕнче пулчĕç. П. Хусанкай 100 çул тултарнине халалланă "Эпир пулнă, пур, пулатпăр!" куравпа тата ытти ĕçсемпе паллашрĕç. Ĕçе çамрăксем енĕпе ĕçлекен аслă специалист Г.Г. Быкова ертсе пычĕ.

Районти пĕтĕм пурăнаканăн 25 проценчĕ (14-30 çулсенчи) е 9282 çамрăк шутланать. Çав шутран 40 проценчĕ е 378 çамрăк тĕрлĕ вĕрентӳ учрежденийĕсенче пĕлӳ пухать, 525-шĕ ĕççĕррисен шутĕнче тăрать. Ытти тăрăхсене 1275 çамрăк ĕçлеме çӳрет, 2983-шĕ ял хуçалăхĕнче вăй хурать.

Çамрăк ăру пурнăç çулĕ çинче хăйĕн вырăнне тупма пултартăр тесе районта тата унăн тулашĕнче чылай ĕç пурнăçланать. Çак тĕлĕшпех тĕрлĕ енлĕ ятарлă программăсем ĕçлеççĕ.

Çамрăксен форумĕ питĕ интереслĕ, активлă дискусси мелĕпе иртрĕ. Çак темăсене хускатса пĕрле сӳтсе яврĕç. Çамрăк специалистăн ĕç рынокĕнчи вырăнĕ, ĕç укçи калăпăшĕ. Амăшĕн капиталĕ демографи тĕлĕшĕнчи лару-тăрăва ырă енне улшăнма май парĕ-и? Тата ытти ыйтусемпе активлă ĕçлерĕç форума хутшăнакансем.



Паллах, кашни çамрăка хумхантаракан çивĕч ыйтусенчен пĕри вăл пурăнмалли çурт-йĕр лартасси. Ку тĕлĕшпе тĕллевлĕ программа ĕçленĕ май çемьесене пысăк пулăшу парать. Çакăн пирки район администрацийĕн капиталлă строительствăпа архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленин ертсе пыракан специалисчĕ Р.В. Волкова тĕплĕн паллаштарчĕ. Субсидисемпе усă курнă çемьесем хăйсен шухăшĕсене каларĕç, патшалăх енчен çамрăк çемьесем валли пысăк пулăшу пулнине палăртрĕç.

Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов кашни ыйту тĕлĕшпех хăйĕн шухăшне палăртрĕ. ЧР Президенчĕ малашлăха пăхса ĕçлекенсене тата пурăнакансене май пур таран пулăшма тăрăшать. Апла пулсан вĕсемпе усă курма пĕлмелле. Пурнăçа ырă еннелле улăнтарас тесен çĕнĕлĕхсем шырамалла. Çавăн пекех хумхантаракан ытти ыйтусем çинче чарăнчĕ, вĕсем вара сахал мар.

"Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн çамрăк гвардийĕ" Пĕтĕм тĕнчери обществăлла организацийĕн представителĕ А. Львов хăйсен ĕçĕпе паллаштарчĕ. Малашне пурнăçлама палăртнă ĕçсем çинче чарăнчĕ.

Малтуртăмлă çамрăксем районта çеç мар, республика шайĕнче те ăс-тăн çивĕчлĕхĕпе мухтанма пултараççĕ. Республикăра пулса иртнĕ тĕрлĕ номинациллĕ конкурса хутшăнса тĕп больницăн, Муркаш райповĕн, МСО "Моргаушская" ОАО çамрăксен канашĕсем 1-мĕш вырăнсене тивĕçнĕ. Ĕçре палăрнăшăн район администрацийĕн Хисеп грамотине 6-ăн, районти вĕрентӳ тата çамрăксен политикин Тав хутне 15-ĕн тивĕçрĕç.

Пухăннисене Е. Голубева, Н. Корнеева, Муркашри лицей солист-вокалисчĕсем тата Москакасси шкулĕнче вĕренекенсем савăнăçлă концерт лартса пачĕç.

Нумаях пулмасть, çамрăксен ыйтăвĕсемпе тĕплĕнрех ĕçлес тесе, районта 24 çынран тăракан координаци канашне йĕркелерĕç. Çитес вăхăтра вара унăн пĕрремĕш ларăвĕ пулĕ. Çак ырă пуçарăвăн витĕмĕ те ырă пуласса шанас килет.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Муркашри тĕп больницăра вăй хуракан çамрăк специалистсем унти ĕç-хĕлпе паллаштарнă самант.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**




***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Лилия Юрьевна Миронова ренгенолаборанткăпа Нина Артемьевна Лобачева акушер-гинеколог районти сывлăха сыхлас ĕçре пĕрремĕш кун мар вăй хураççĕ. Кашниех çынсем умĕнче ят-сума тивĕç. Акă, Нина Артемьевна районти тĕп больницăра ĕç стажĕпе чи ваттисенчен пĕри. Вăл алла врач дипломне илнĕреннех кунта. Пĕтĕмпе 33 çул. Ырă ăмсану çуралать кун хыççĕнче.***

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Спорт



# Çĕнтерни мар, хутшăнни паха

Февралĕн 22-мĕшĕнче инвалидсен тата куç курманнисен пĕрлешĕвĕ шашка турнирĕ ирттерчĕ. Муркашри ача-пăча тĕслĕх библиотеки хапăл туса кĕтсе илчĕ спорт тусĕсене. Çанталăк сивви вĕсене пĕрре те чăрмав кӳмерĕ. Ачасем шашка вăййине хутшăнни уйрăмах кăмăла кайрĕ. Тан мар кĕрешӳре пурте активлăхпа палăрчĕç. Çапах та ăмăрту çĕнтерӳçĕсемсĕр пулмасть. Пĕрремĕш вырăна А.А. Ермолаев тивĕçрĕ. Вăл район шайĕнче çеç мар унăн тулашĕнчи ăмăртусенчен те çĕнтерӳпе таврăнать. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Ю.А. Горшковпа В.И. Егоров пайларĕç. Ачасем хушшинче вара К.О. Павлова тата Н.В. Осинкин çĕнтерӳçĕсем палăрчĕç. Вĕсем пурте инвалидсен тата куç курманнисен пĕрлешĕвĕн активисчĕсем. Çĕнтерӳçĕсем кашниех асăнмалăх парнесене тата дипломсене тивĕçрĕç. Çак ăмăртăвăн пысăк пулăшуçи Лилия Валерьевна Николаева Муркашри "Визит" суту-илӳ çурчĕ" чикĕллĕ яваплăхлă обществăн генеральнăй директорĕ пулчĕ.

**Инвалидсен пĕрлешĕвĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: турнир çĕнтерӳçисем.**

## Ăста алăллă çынсем çинчен

# Вĕсенче туятăп чун йăпатмăшне



Çыннăн юратнă ĕç пурри чуна лăплантарать, пусăрăнчăк кăмăла уçать, илемлĕх тĕнчин серепине туртать. Çакăн пек ырă енсене туять те Валентина Григорьевна Кольцова çемçе теттисене ăсталанă май.

Çĕнĕ чунсем ăсталас ĕçе вара çамрăклах пикеннĕ. Ку енĕпе ăстаçă Шупашкар хулинчи Пионерсен çуртĕнче чылай ĕçленĕ. Унтанпа чылай шыв-шур юхрĕ, "пионер" пĕлтерĕш те пирĕн ырă астăвăм çӳлĕкне кăна юлчĕ. Виçĕ çул каялла Юнкă шкулĕнчи кĕçĕн классенче ăс пухакансене çак ăсталăха вĕрентнĕ. Вăл вăхăтсене унта вĕреннĕ ачасем ырăпа аса илеççĕ.

Халĕ ăстаçă Мăн Сĕнтĕрти инвалидсемпе ватă çынсен çуртĕнче ăшă йăва тупнă. Кунта вĕсем Владимир пиччĕшĕпе пĕр пӳлĕмре пурăнаççĕ. Хĕл кунĕсенче Мăн Сĕнтĕрте, çулла вара тăван килне часчасах çӳреççĕ. Унти пахчара çĕнĕ юлташĕсемпе çĕр улми лартса ӳстереççĕ.

Вĕсем пурăнакан пӳлĕме кĕрсен юмах тĕнчине лекнĕнех туйăнать. Мĕн тĕрлĕ кăна çемçе пусмаран хăй аллипе янтăланă чĕр чун тата ытти тетте çук пулĕ, чăн-чăн лавкка сентри тейĕн. Зала кĕрсен те илемлĕскерсем куçран тинкереççĕ. Акă, Валентина Григорьевна учительсен районти конференцие те хутшăнма кăмăл турĕ. Вĕсем унта Маргарита Николаевна Пушкаревапа хăйсем янтăланă теттесемпе пухăннисен чунĕсене тыткăнларĕç.

– Уяв çитнĕ май, эпĕ, хамăр хӳтлĕх тупнă Ваттисен çурчĕн ертӳçине Людмила Геннадьевна Каргинана тата Нискассинчи вăтам шкулти "Çемçе тетте" пултарулăх пĕрлешĕвĕн ертӳçине М.Н. Пушкаревана пур енĕпе те пулăшнăшăн, ăнланнăшăн тав сăмахĕ каласа, ăнăçусем сунатăп, – терĕ Валентина Григорьевна.

Пурнăçа хаклама пĕлсен, кичем тăвата стена хушшинчен çутталла ăнтăлсан, ăнăçу патне те çул кĕскелет иккен.

**Р. МАКАРОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Валентина Григорьевна çемçе теттесен ытамĕнче.**

## Спорт хыпарĕсем

***Конькипе чупасси.*** Февралĕн 18-мĕшĕнче Шупашкарта конькипе чупса республикăра мала тухассишĕн ăмăрту иртнĕ. Пирĕн районти В. Егорова ячĕпе хисепленекен ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн воспитанникĕсем унта хăйсене лайăх енчен кăтартнă. Арçын ачасенчен Кирил Ковалев 1-мĕш, Дима Пушков 3-мĕш, хĕр ачасенчен Лена Кузнецова 3-мĕш, 1993-1995 çулсенче çуралнă яшсенчен Анатолий Иванов 2-мĕш, хĕрсенчен Людмила Филиппова 1-мĕш, Светлана Леонтьевапа Ирина Федотова 2-мĕш, 1991-1993 çулсенче çуралнă яшсенчен Николай Кожевников тата хĕрсенчен Нина Григорьева 2-мĕш, 1989-1991 çулсенче çуралнă хĕрсенчен Оксана Вязова 3-мĕш вырăнсем йышăннă.

***Шашка.*** Февраль уйăхĕн вĕçĕнче Шупашкарта хула чемпионĕн ятне çĕнсе илессишĕн шашкăлла выляссипе ăмăрту иртнĕ. 36 спортсмен хутшăннă унта. Вĕсем хушшинче 2 спорт мастерĕ, 20 ытла спорт мастерĕн кандидачĕ, 1-мĕш разрядлă спортсменсем.

Пирĕн районтан спорт мастерĕн кандидачĕсем 5-ĕн хутшăннă. Кусем районти тĕп больницăри Л. Андреев хирург, Йӳçкассинчи А. Ермолаев, Орининти А. Прокопьев, Мĕн Сĕнтĕрти В. Егоровпа В. Афанасьев. Л. Андреев республика финал ăмăртăвне хутшăнма тивĕç пулнă.

Мартăн 10-мĕшĕнче вара тăватă хутчен район чемпионĕ пулнă А. Ермолаев хăйĕн парнисене çĕнсе илессишĕн районта иккĕмĕш хут шашкăлла выляссипе ăмăрту ирттерет. Вăл район администрацийĕнчи методика вĕрентĕвĕн кабинетĕнче 10 сехетре пуçланать.

***Хĕллехи велокросс.*** Мартăн 3-мĕшĕнче хĕллехи велокросс енĕпе республикăра мала тухассишĕн ăмăрту иртнĕ. Унта В. Егорова ячĕпе хисепленекен ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕнче ăсталăха туптакансем те хутшăннă, лайăх результатсем кăтартнă. 1993-1994 çулсенче çуралнă хĕрсенчен Снежанна Федотова 1-мĕш, Маргарита Порфирьева 2-мĕш, Ирина Федотова 3-мĕш, яшсенчен Евгений Казамбаев 2-мĕш, 1995-1996 çулсенче çуралнă Настя Николаева 1-мĕш, Наташа Федотова 2-мĕш, Таня Волкова 3-мĕш вырăнсене тивĕçнĕ.

***Хĕллехи мини-футбол.*** Мартăн 8-мĕшĕнче Муркашри Спорт çуртĕнче предприятисемпе организацисем тата учреждениисем хушшинче районта мала тухассишĕн ĕç çыннисен Спартакиади шучĕпе хĕллехи мини-футбол ăмăртăвĕ иртет. 11 сехетре пуçланать. Мала тухнă команда диплома, кубока тата парнесене тивĕçет, иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăн йышăннисене дипломсем параççĕ. Чи лайăх выляакансене те парнесем пама пăхнă.

***Ирĕклĕ майпа кĕрешесси.*** Мартăн 10-мĕшĕнче Муркашри Спорт çуртĕнче районти воин-афганецсене асăнса ирĕклĕ майпа кĕрешессипе республика турнирĕ иртет. Турнира савăнăçлă лару-тăрура 10 сехетре уçаççĕ, тытăçусем 11 сехетре пуçланаççĕ. 9 сехетрен вара спортсменсен йывăрăшне виçесси пуçланать. Пĕрремĕш вырăн йышăннă командăна диплом тата куçса çӳрекен кубок, призлă вырăн йышăннисене дипломсем параççĕ, уйрăм участниксене вара Хисеп грамотисемпе медальсем кĕтеççĕ.

## Вулакан пултарулăхĕ

# Аннене

Ватлăхри канлĕхе упрайманшăн
Эс пире халь, аннеçĕм, каçар.
Чун ăшшийĕ ялан эсĕ маншăн,
Пĕрле чух кăмăлтан калаçар.
Калаçар васкамасăр, каç вăрăм,
Чун ыратăвне йăлт уçса пар.
Йăнăшсем те нумай пуль эп турăм,
Кӳрентертĕм те пулĕ, каçар.
Эс каçар, çамрăкла итлеменшĕн,
Вăй-питти чух хыт чуншăн каçар.
Хăш чухне, тен, эс вăрттăн йĕретĕн,
Мĕншĕнне халь манран ан пытар.
Халь кала еплерех пурăнатăн
Пĕчченех хĕллехи каççенче?
Выльăх-чĕрлĕхпеле тăрмашатăн,
Калаçан кушакпа ирсенче.
Мĕн тăвас-ха çапла пурнăç çулĕ,
Улталаймăн шăпа çырнине.
Ан васка, тен, малта ырлăх пулĕ,
Халь выляр мăнукпа асанне.
Пӳрте шăршă сарать тутлă кукăль,
Чăх тукмакĕ пĕр чашăк ларать.
Выляса çеç çӳрет пĕчĕк мăкăль,
Çак самант чунăма вăй парать.
Тем пулсан та сан пур-ха малашлăх,
Кур, килсех-ха çӳреç ачусем.
Тур пиллетĕр сана канлĕ ватлăх,
Савăнтарччăр ялан мăнуксем.
Çĕр çинче пур чухне савăнасчĕ
Пӳрт ăшши тытакан аннепе.
Кирлĕ чух алтăрпа шыв парасчĕ,
Ан пушантăр нихçан кĕреке.

**Ю. КОВАЛЕВ.**

Атапай ялĕ.

Пĕлтерӳсем. Объявления

**Продаем цемент М-400, шифер семиволновый, восьмиволновый, плоский, рубероид 15 метровый. Обращаться: с. Моргауши, магазин «Рука мастера».**
**Тел.: 8-903-346-40-58. 3-5.**

**Продаю лесопиломатериал. Марий Эл. Документы, чеки предоставляем.**
**Тел.: 8-905-379-01-02. 4-10.**

**Район центрĕнчи йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен çуртра мартăн 6-мĕшĕнче «Юлия» суту-илӳ павильонĕ уçăлчĕ. Унта чĕрĕ чечексем, пахча çимĕç, чечек, курăк вăррисем, чечек лартмалли савăтсем, Белоруçире кăларнă костюмсем, арçын кĕписем т. ыт. кирлĕ япаласем те туянма пулать.**

**На рынке МУП «Моргаушский» открывается офис фирмы по услугам населения стройхозтоварами «УМЕЛЫЙ ПАПА».**
**Фирма предоставляет услуги по следующим видам: ремонт телевизоров, отделочные работы,сварочные работы, сантехнические работы, электромонтажные работы, изготовление мебели по заказу, строительные работы (плотницкие и столярные), стройхозтовары по заказам с доставкой на дом, проведение торжеств, евроремонт.**
**На работу приглашаем квалифицированных работников. Оплата сдельная.**
**Наш адрес: с. Моргауши, ул. Чапаева, д. 44 «а», «МУП рынок «Моргаушский».**
**Тел.: 8-905-341-29-62, 8(241)34-2-16.**

Коллектив сотрудников Моргаушского отдела Управления Федеральной регистрационной службы по Чувашской Республике выражает соболезнование директору МУП «Бюро технической инвентаризации» Николаеву Л.Ф. по поводу кончины матери

**НИКОЛАЕВОЙ**
**Евдокии Емельяновны.**

ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРŸ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
Директор-главный редактор
А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru
Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3552.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 06.03.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру ИЛЛАРИОНОВА Р.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.